# «Мерчен» Орлов-Шуçăмпа Эктел тусĕсене пухрĕ

Чăваш патшалăх наци библиотекинче «Мерчен» музыка тĕпелĕ ĕçлеме пуçланăранпа икĕ çул çитрĕ. Ăна йĕркелес тĕлĕшпе виçĕм çул республикăри чи пысăк вулавăшăн тĕп библиотекарĕ – музыкăпа нота пайĕн ертӳçи В.С.Архипова пысăк ĕç туса ирттернĕ. Пĕлтĕртенпе «Мерчен» музыка тĕпелне Раççей Федерацийĕн композиторсен союзĕн членĕ, ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ С.И.Макарова ертсе пырать.

Вера Севастьяновнăпа Светлана Ильинична нарăс вĕçĕнче йĕркеленĕ музыка тĕпелĕн уявне çывхарса килекен РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕн, Чăваш АССР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕн тата халăх артисчĕн А.Г.Орлов-Шуçăмăн 100 çулхи юбилейне, çавăн пекех Çăварнине халаллана. Çав кунхине тепĕр пулăм та сиксе тухрĕ – Раççей Федерацийĕн писательсен союзĕн тата Чăваш художникĕсен союзĕн членĕн, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн В.П.Сидоров-Эктелĕн (1950-2005) çуралнă кунĕччĕ. Аристарх Гавриловичпа Василий Петрович 1980 çулсенче паллашнă та ĕмĕрлĕхех туслашнă. Эктел сăвисемпе Орлов-Шуçăм вун-вун юрăпа романс хайланă. Çавна май нимĕн тĕлĕнмелли те çук: Чăваш наци библиотекин чи хăтлă та илемлĕ залĕнче пулса иртнĕ «Мерчен» музыка тĕпелĕнче пуринчен ытларах икĕ классикăн юлташĕсемпе ентешĕсем – Çĕрпӳ тата Елчĕк тăрăхĕсенчен тухнă культурăпа искусствăна юратакансемпе вĕсен çывăх тăванĕсемччĕ.

Музыка тĕпелĕн уявне яланхи пекех илемлĕ те çĕкленӳллĕ кăмăлпа Светлана Макарова ертсе пычĕ. Вăл малтанах тĕпел хăнисене культура çулталăкĕнчи Чăваш Енри чи курăмлă пулăмсенчен пĕри Аристарх Орлов-Шуçăмăн 100 çулхи юбилейĕ шутланнине, ăна республика шайĕпе ака уйăхĕнче уйрăмах анлă паллă тума палăртнине пĕлтерчĕ.

– 1930 çулсен пуçламăшĕнче Çĕрпӳ районĕнчи Уйкас ялĕнче çуралса ӳснĕ, Шупашкарти музыкăпа театр техникумĕнче вĕренекен яштака та сатур каччă темиçе музыка инструменчĕпе выляма хăнăхнă, хорта юрласа тата хулари вĕрсе каламалли оркестрта та палăрнă. Вун çичĕ çулхи студент хайланă «Авăнмасăр, вăй хумасăр» çĕкленӳллĕ юрра пысăк уяври пĕр концертра питĕ тимлĕ итленĕ чăвашсен паллă сăвăçи Уйăп Мишши чăтаймасăр пурте илтмелле: «Çакă пирĕншĕн чăн-чăн хӳхĕм шуçăм!» тесе кăшкăрса янă. Çавăн хыççăн Аристарха, пурте пĕрле калаçса татăлнă тейĕн, Орлов-Шуçăм тесе чĕнме пуçланă. Иртнĕ ĕмĕр варринчен пуçласа чăвашсен чи пултаруллă та хăйне евĕрлĕ хор дирижерне «Маэстро» хушма ят çыпçăннă, – терĕ Светлана Ильинична чăваш музыка искусствин аталанăвĕн историйĕнче тарăн йĕр хăварнă Аристарх Гаврилович пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каласа панă май.

Чăваш Енри талантлă çамрăк композитор тата юрăпа ташă ансамблĕн пирвайхи илемлĕх ертӳçи тата хор дирижерĕ çинчен Мускавра тата Атăлпа Урал тăрăхĕнчи облаçсемпе республикăсенче Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçланиччченех пĕлнĕ. 1940 çултан А.Г.Орлов-Шуçăма СССР композиторсен союзне йышăннă. Вăрçă вĕçленсен вăтăр çулхи Аристарх Гаврилович çĕнĕрен ĕçлеме пуçланă Шупашкарти музыка училищин директорĕнче вăй хунă. Иртнĕ ĕмĕр варринче вăл халăх юратакан вун-вун юрăсăр пуçне «Çĕмĕрт çеçки çурăлсан» музыка комедине Чăваш патшалăх академи театрĕн сцени çинче кăтартма мехел çитернĕ, «Çăлтăр витĕр çул» опера тата ытти пысăк произведени хайланă.

Малалли 8 стр-ра.